№ Инв. 2993. 41-257
Рег. №2.



Василий Усли

# Сăвăсем

ОБЯЗАТЕЛЬНЫЕ
экземпляры в количестве ______
экземпляров
ПОЛУЧЕНЫ
17 февраля 1941 г.

ОБЯЗАТЕЛЬНЫЙ
КОНТРОЛЬНЫЙ
ЭКЗЕМПЛЯР

ВАСИЛИЙ УСЛИ

# СĂВĂСЕМ

ЧАССР ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ
ШУПАШКАР ● 1941

## ЧӐВАШ ХАЛӐХӖ

Истори пур кашни ҫӗршывӑн хӑйӗн,
Ӑна халь кам хирӗҫлемешкӗн хӑйӗ?
Ман халӑх авалхи историне
Юнпа ҫырса хӑварнӑ ҫӗр ҫине.
Чӑваш республикӗн кашни кӗтесӗ
Асилтерет хӗн-хурлӑ тӗнчене.
Иртнисене пуҫра аса илмесӗр,
Эп хаклаймастӑп ун хальхи ӗҫне.

Чӑваш ҫӗршывӗ—пит ҫырма-ҫатраллӑ,
Вӑрман кӑна кашланӑ, тет, авал.
Патшасенчен тарса хӗн-хурлӑ халӑх
Килсе вырнаҫнӑ ҫакӑ ҫӗршыва.
Кунта вӑл ирӗклӗн пурӑнасшӑн пулнӑ—
Нимле законсӑр, кайӑк-кӗшӗк пек.
Анчах ӑна патша законӗ тупнӑ,
Тиенӗ ун ҫине инкек-синкек.

Темле хӗссен те, пултаруллӑ халӑх
Пӗтме паман этемӗн тивӗçне.
Шӑпӑр-сӑрнайпа вӑл ташлаттарнӑ
Çӗршер çулхи юман-кӗрешсене.
Кичемлӗ пурнӑçне те илемлетнӗ
Ытарайми илемлӗ юрӑ-кӗвӗне,
Паттӑрсем çинчен юмах çӳретнӗ,
Кӗрешӗве çӗкленнӗ вӑл паттӑр пек.

Кӗрешнӗ май ун вӑйӗ çирӗпленнӗ,
Вӑл кӗрешсе çеç тухнӑ ирӗке...
Социализм халӗ чечекленчӗ
Çуркуннехи уяр ӗç ирӗ пек.
Авалхи пек, килсе хуплаймӗ халӗ
Хӗн-хур çырма-çатраллӑ вырӑна.
Пусмӑрлӑхра авал тертленнӗ халӑх
Халь савӑнса, телейлӗн пурӑнать.

1940.

## ПАРАШЮТИСТ КАЛАВĔ

Çут çунатлă, вут чĕреллĕ кайăк
Кĕрлесе иртсен ял тĕлĕнчен,—
Урама тухатчĕ пĕтĕм халăх,
Тӳпене пăхатчĕ тĕлĕнсе.

Манăн та çӳлте вĕçес килетчĕ,
Ун çинчен шутлаттăмччĕ ялан.
Кăшкăраттăм: ларт мана та, летчик,
Эпĕ те пыратăп санпала.

Çук, мана илтместчĕ савнă летчик,
Шавĕ çеç юлатчĕ хыçĕнчен.
Вăл пит хăвăрттăн вĕçсе иртетчĕ,
Çухалатчĕ пĕлĕт хушшинче.

— Вăл хăçан тепре ял урлă кайĕ?—
Тесе çеç юлаттăм ĕмĕтпе.
Тепĕр чух вĕçсе иртет-тĕк кайăк,
Туйăнатчĕ летчик иртнĕ пек...

... Вăхăт иртрĕ, çитрĕ савнăç кунĕ:
Манăн сикмелле парашютпа.
— Андрианов, лар,—тет летчик Дунин.
Эпĕ лартăм çитнĕ шанчăкпа.

Ункă турĕ, пăралана евĕр,
Самолет хăпарчĕ ерипен.
Туйăнчĕ мана мотор кĕрлевĕ
Хам юратнă хĕр юрлани пек.

Халĕ манăн та юрлассăм килчĕ
Çамрăк ĕмĕр телейли çинчен...
Тӳперен тăван çĕршыв сăн-пичĕ
Пит илемлĕн курăнни çинчен.

Çĕрелле пăхатăп та, куратăп
Жнейкăсем хирте ĕçленине.
Ывăç çийĕнчи пекех хула та
Тухса тăчĕ манăн куç умне.

Тĕлĕнетĕп: ăслăлăх хăвачĕ
Çĕнтерет çанталăк хăватне.
— Хатĕрлен!—тет летчик, паллă пачĕ.
Тухрăм эп хуллен çунат çине.

Сикрĕм, ярăнса анма пуçларăм,
Пĕчĕк чух анне сиктернине
Аса илтĕм, эп унтан сăнарăм
Тепĕр хут çĕршывăн илемне.

Илчĕ вăл мана, аннеçĕм евĕр,
Хăйĕн ытамне. Пур таврана
Янратма пуçларĕ юрă-кĕвĕ,
Тавтăваççĕ юлташсем мана.

1936.

## ЩОРС

### I

Днепр пулнă хĕрлĕ юнлă,
Шыв пек юхнă юн, куççуль.
Юмах пек çеç тăрса юлмĕ
Çавăн пек хĕрӳ кунçул.

Днепр тăрăх пынăçемĕн,
Эп асилтĕм иртнине:
Камсемпе эпир кĕрешнĕ,
Мĕнле çĕннĕ вĕсене...

Пулнă Уралта—Чапаев,
Паттăр Щорс—Украйнăра.
Иккĕшин çинчен чап кайрĕ
Сивĕ Арктика таран.

Украина! Украина!
Ывăлна ан ман, мухта:
Тăшманран туртса вăл илнĕ
Сана вунтăххăрмĕш çулта.

## II

Днепр хĕрринче дивизи,
Щорс штабра парать приказ:
„Разведка каятăр виççĕн",—
Тет вăл висĕ çамрăка.

Курăнмасть нимскер—хура çĕр,
Майĕ çук—вĕçет тăман.
Çăлтăрсем пек курăнаççĕ
Çутăсем мăн Киевран.

Хĕрлĕ салтаксем сăнаççĕ:
Мĕн тăваççĕ халь унта?
Леш енне каçма шыраççĕ
Шăннă вырăн çĕрхута.

Киевра—тăшман, Петлюра,
Таврара—ун бандисем.
Куркульсем юрлаççĕ юрă,
Вĕсене вăй-хал сĕнсе.

Тӳнĕ сахăр пек шап-шурă
Кăпăш юр çинче çын шурĕ.
Пĕр разведчикне чĕнет:
Сирĕн командир кам?—тет.

— Кайăпăр штаба. Эс курăн
Командир камне хăвах...

Утрĕ малалла хăюллăн,
Хутшăннă пек вăй-хăват.

Вăл штабра пит хĕпĕртерĕ:
— Эй, Микола-командир!
Мĕншĕн, батько, час килмерĕн?
Кĕтнĕ тек сана эпир.

Шуррисем çакса вĕлерчĕç
Манăн ывăлăмсене.
Манăн ывăлсенĕн терчĕ
Хытă тиврĕ чĕрене.

Эпĕ юлтăм нимĕнсĕр,
Илĕр хăвăрпа мана та!
Днепр урлă каçаратăп
Пĕр паромсăр, кимĕсĕр.

Эпĕ—вата пулăçă—
Шăннă ырăна пĕлеп.
Днепр урлă пулĕ çул
Çавăнта сире пит шеп...

— Ку ĕçе суймасăр тытăн!—
Терĕ командир хуллен:
Суйнăшăн закон пит хытă,
Эсĕ ху ăна пĕлен...

— Эсир кунтине пĕлсессĕн,
Эпĕ килтĕм пулăшма.
Эпĕ çапăçса вилесшĕн,
Туйтăр ман вăя тăшман!

Вăл мана йăлтах тĕп турĕ,
Тек ураймĕ çав тери!
Тулĕ сан шăпу, Петлюра!..
Хыттăн кăшкăрчĕ старик.

Щорс ăна разведчик турĕ,
Пулăç савăнса кулать...
Çав каçах дивизи тухрĕ
Пулăç хыçĕнчен çула.

Умлă-хыçлăн выртрĕç, шурĕç.
Шартлатать пăр аялта.
Çурĕ, çурĕ шурă юрĕ,
Çухатасшăн вăл çултан.

Тухрĕç Днепр хĕррине.
— Ыртăм.
— Çĕнтерсен канатăн,—
Йăпатаççĕ пĕр-пĕрне.
„Ур-ра!“—илтĕнчĕ команда.

Манăç пулчĕ ывăну та,
Хутшăнчĕç атакăна.
Шур çеремлĕ вăрăм улăх
Юнпала вараланать.

Çĕнтерӳллĕ Щорсăн çарĕ
Кĕчĕ хулана, çĕнсе.
Хирĕç тухрĕ пĕтĕм халăх
Ялавсем вĕлкĕштерсе.

Çĕнтерӳллĕ класс сассийĕ
Янăрарĕ пур енчен:
— Украина тĕп хулийĕ
Хĕрлĕ çарăн аллинче.

1937.

## ХАСАН ВӐРҪИ

Ҫил мар улана, урнӑ—
Шакал пек ӳлесе
Ҫул хывнӑ чикӗ урлӑ
Тӑшман снарячӗсем.

Совет ҫӗрне ӑмсаннӑ
Пуҫтах самурайсем,
Хасан патне капланнӑ
Кӑткӑсем пек вӗсем.

Самолётсен кӗрлевӗ
Чӗтретнӗ тӳпене,
Танксем те тӑвӑл евӗр
Шав тунӑ ун чухне.

Пит лайӑх хӑналанӑ
Кӗтмен хӑнасене,
Туранӑ та таптанӑ—
Ан кӗччӗр ҫын садне!

Тăшман вăйне аркатнă
Мухтавлă Хĕрлĕ çар.
Ялан çапла сыхлатпăр
Эпир çĕн пурнăçа.

Тăшман ним те илеймĕ
Совет пахчийĕнчен—
Тăван çĕршыв илемĕ
Пит çирĕп алсенче.

1939.

## СЫВЛĂШРИ ХĂНА

Эпĕ куртăм
Ăна чи малтан,
Вăл тăратчĕ
Планер умĕнче.
Эпĕ ыйтрăм:
Асатте, эс ăçтан?
Вăл каларĕ:
Колхоз ялĕнчен.

Вăл ватă.
Кăвакарнă сухалĕ,
Иртнĕ вăл çулĕпе
Утмăлтан.
Вăл çапах та
Хисеплĕ çын халĕ,
Паллă ударник ялта.

Вăл каларĕ:
— Кулак ехĕр-мехĕр
Колхозри ĕçсене
Пăтратать.
Ну, çапах та

Кулакӑн элекӗ
Варлаймарӗ „ударник“ ята...

„Ҫӗнӗ ҫурт“ колхозра пирӗн,—терӗ,—
Чухӑн пурнӑҫ юлать
Манӑҫа.
Пӗр ҫӗр аллӑ
Ӗҫкунӗ ӗҫлерӗм
Эп, хам ватӑ пулсан та,
Кӑҫал.

Ҫамрӑксем
Уй-хире кайнӑ чух
Ман юлассӑм килместчӗ килте,
Вӗсемпех
Савӑнать манӑн чун
Машинсен шавӗпе
Уй-хирте.

Вӑл табак
Тултарать чӗлӗмне,
Хӑй ҫаплах калаҫать
Пирӗн ватӑ:
— Преми пачӗҫ
Кӑҫал ҫуркунне,
Тӑхӑнтарчӗҫ мана
Сӑран атӑ.

Акӑ халь
Колхозран мана ячӗҫ

Çамрăксен уявне
Хулана...
Калăр эсĕр,
Мĕнле çакăн ячĕ,
Ун çинчен ăнлантарăр мана.

— Сывлăшра
Вĕçекен хурçă кайăк,
Эпĕ хам унпала вĕçекен...—
Каласа кăтартать Саламбаев
Хурçă кайăк çинчен
Старике.

Ватă çын
Савăнса çамрăкланчĕ,
Кулкалать вăл пĕчик ачалла,
— Ку, чăнах, тет,
Аван япала,
Унпала кăшт вĕçсен,
Пит аванччĕ.

Ах, анчах
Винтисем пит нумай,
Çухатсассăн—питех те хăрушă...
— Асатте,
Сана кăмăл тума
Эпĕр хатĕр.
Ярăнар-и пĕр хушă?

— Ман пуласчĕ,
«Илье турă пек»,

Виличчен сывлăшра та
Пăртаксçă.
Калăр эсĕр
Мана тÿррипе:
Мĕн чухлĕ тăрать?
Питĕ пысăк-тăр такса?

— Лар, старик,
Нимĕн такса укçисĕр
Кайăпăр тÿпене сăнама.
Эпĕр халĕ
Пророк урамисĕр
Пултаратпăр вĕçме,
Сас пама.

Юрламашкăн
Пропеллер пуçларĕ,
Вăл чун кĕртрĕ вĕçме
Кайăка.
Аэроплан кĕрлесе вĕçсе карĕ
Курăнмие, таçта,
Аякка...

Ав юлайрĕ тăрса
хумлă Днепр.
Юлчĕç аслă хирсем те инçе...
Çавăн пек
Ярăнтартăмăр эпĕр
Утмăл пилĕк çулхи
Мучине.

1934, Киев.

## ЧИКЁРЕ

Эп тăрап ик тĕнче хушшинче,
Эп хĕвел çĕршывне хураллатăп.
Куçăмсем тинкереççĕ инçе,
Шавсене хăлхара тек аллатăп.

Илтрĕм эп: ман тăван çĕршывра
Ĕç юрри янăрать савăнуллăн.
Леш енче, ав, такам макăрать—
Хурлă сас илтĕнет чикĕ урлă.

1937.

* * *

Эп тĕкĕр çине юратмастăп пăхма,
Курассăм килмест пĕркеленнĕ сăна.
Эп çамрăклăхпа çиçекен чунăма
Çĕн ĕмĕтсемпе çĕнетсе пурăнап.

Чĕре, фонтан пек, юн тапса тăнă чух
Ĕçлес кăмăла эп çиçтерĕп хĕç пек.
Пĕр ĕççĕр чухне кĕвĕçет манăн чун,
Эп çамрăкланатăп ĕçри тивĕçпе.

Хулра вăй пур чух, пуç ĕçленĕ чухне
Эп çамрăк яш пек туйăнатăп хама...
Эп тĕкĕр çине юратмастăп пăхма,
Пăсса кăтартать вăл хальхи çын сăнне.

1940.

* * *

Пушкина вуланӑ чух ялан,
Умӑмра—илемлӗ ҫуркунне:
Шыв юххи, симфонилле вӑрман
Кӑмӑла ҫӗклеҫҫӗ манӑнне,

Ирӗке чӗнеҫҫӗ чӗрене
Нихӑҫан асран кайми тӗссем—
Пушкин ҫырнӑ ҫепӗҫ сӑвӑсем.
Аслӑ ҫын—поэзири хӗвел—

Улӑштарчӗ ман юрра-кӗвве,
Савнӑҫ хурлӑха ҫӗнтернӗ пек:
Лайӑх та янравлӑ кӗвӗпе
Ирӗклӗх ҫинчен юрлатӑп эп. .

1939.

## КАЗАХСТАН

Кунта пулайна эрём, хăйăр,
Ним майсăр вёçне çилпеле тусан.
„Кунта кам çынĕ пуранмашкăн хăйĕ“,—
Тесе калаçна, çавсене курсан.

Халь апла мар, апла паян кам шутлĕ?
Кам кўрентерĕ-ши казахсене?
Халь Казахстан та хурçă утлă,
Тĕве çинчен вал ларчĕ хурçă ут çине.

Çĕр çĕмĕрсе чупать хăватлă поезд,
Пушхир вăранчĕ хурçă шавĕпе.
Çĕр мамăкне кунта тек турттаратчĕç
Караванпа, чуман тĕвесемпе.

Хăратас çук тек Казахстан пушхирĕ
Тискерлĕхпе—çулçўревçĕсене.
Янрать кунта хаваслă ĕçĕн ирĕ,
Пире те вăл унта пыма чĕнет.

1940.

## КОЛХОЗНИКСЕН ЮРРИ

Юратрӑм та саврӑм хӗвеле—
Пӗрмай ҫутӑ парса тӑнӑран.
Юратрӑм та саврӑм эп Ленина
Пур халӑха тӑван тунӑран.

Хӗвелӗм, хӗвел анса ларсан,
Ун ҫутине парать уйӑх ҫӗре.
Аслӑ Ленин вилнӗ пулсан та,
Ун ырлӑхне парать Сталин пире.

Хӗвелпе уйӑхӑн ҫуттипе
Пур йывӑҫ-курӑк ырӑ курать.
Ырӑ куратпӑр эпир колхозра
Ленинпала Сталин пулнипе.

Ай, юрлар-ха, юрлар юррине,
Ҫӗн самана ҫинчен хунине.
Ай, юрлар-ха, юрлар савӑнса,
Ленинпала Сталина мухтаса.

1940.

# ПЕЙЗАЖ

* * *

Тӳперен хӗвел хӗртет,
Эп саванатӑп уй-хирте.
Тыра-пула кашлать умра,
Манран вӑрам пӗвӗпе.

Эп пӑхап та хӗпӗртеп:
— Акӑ савнаҫ, ак телей!..
Ан кунта,—тетӗп хӗвеле,—
Савӑнар пӗрле хирте.

1940.

## ТЫРПУЛ ПИÇЕТ

Пирĕн бригадир ирех
Тухрĕ аслă уй-хире.
Вăл юрлать çĕршыв çинчен,
Ун юрри каять инçе.

Тĕперен хĕвел хĕртет,
Çут прожектор пек çиçсе.
Пирĕн аслă уй-хирте
Сĕрĕшсе тырпул пиçет.

Çакă тырăпа пĕрле
Пирĕн пурнăç çитĕнет,
Кĕç вăл ылттăн-кĕмĕлле
Кĕрĕ пирĕн пӳлмене.

Бригадир çӳрет пăхса,
Вăл пăхать те хĕпĕртет:
Гектартан илетпĕр, тет,
Икçĕр пăт ытла кăçал.

Тухĕ ытларах та тен,
Лайăхрах пухса кĕрсен...
Кĕчĕ бригадир хиртен
Чĕререн хĕпĕртесе.

1939.

## ВЫРМАРА

Тӗлкӗшет шевле ваййи ҫӗр ҫиййӗн,
Тӗрлӗ тӗслӗн эрешлет хире.
Тар тумлать ҫут сывлӑм шерепиййӗн
Хӗвелпе пиҫӗхнӗ пӳ-сирен.

Хумханать ыраш пусси, курап эп,
Ылттӑнланӑ тинӗс шывӗ пек.
Жнейка—тырӑ тинӗсӗн карапӗ
Хӑвӑрттӑн шӑвать тыр пуссипе.

Ҫӗмелсем хыҫран ларса пыраҫҫӗ
Инҫетри ту тӗмескисем пек—
Пӗрчӗшерӗн панӑ тырӑна ҫӗр
Тавӑрать халь лавӗ-лавӗпе.

1939.

## КĔРКУННЕ

Çанталăк сулхăн. Хумлă—сывлăш тинĕсĕ,
Иртеççĕ пĕлĕт-карапсем шыв сирпĕтсе.
Çил вĕсене хăвать-мĕн хăйĕн çулĕпе,
Ĕлĕк-авал пире нуша хӳтерне пек.

Çил алхасать, урать. Çаралнă йывăççем
Лараççĕ йывăррăн, салхуллăн пăлханса.
Вĕçеççĕ сывлашра саралнă çулçăсем,
Хуркайăксен карти пек, çаврăнса.

Аманнă кайăк евĕр, ушкăнран юлса,
Пĕр сар çулçийĕ анчĕ ӳкрĕ ман умма.
Ăна каларăм эп: вĕçленчĕ пулĕ сан
Илемлĕ кунçулу, кĕр тăмĕ ӳкнĕ май!

Телейлĕ эп. Çак çулçăна тăм тивнĕ пек,
Хĕн-хур хуçаймĕ манăн савăк пурнăça.
Чечекленет çĕршыв çулталăкпех,
Вăл хӳтĕлет телейлĕ сăвăça.

1938.

* * *

Килчĕ хурлăх евĕр шăвăнса кĕр каçĕ,
Йĕпкĕн хура чатăр карчĕ çĕр çине!
Эпĕ аса илтĕм—пирĕн иртнĕ пурнăç
Çакă каç пек тĕксĕм, хурлă пулнине.

Иртнĕ пурнăçа эс çĕрле çеç асилĕн;
Кăнтăрла нихçан та килмĕ вăл аса.
Ма тесессĕн, халĕ пурнăçăмăр пирĕн,
Пĕлĕтсĕр кун евĕр, çутă та таса.

1939.

* * *

Лĕпĕшсем вĕçеççĕ, йăрăм-ярăм
Сывлăшра шап-шур йĕрсем туса
Вылятаççĕ çунаттисене...
Çук, вĕçмеççĕ лĕпĕшсем, каларăм

Лĕпĕшсемпеле танлаштарса
Шурă мамăк пек юр çунине—
Килчĕ виçĕ уйăхлăх хĕлле
Хăнана шур кучченеçпеле.

1940.

## ХĔЛЛЕХИ КĂМĂЛ

Нумаях та пулмасть, йывăç-курăк
Ешĕретчĕ, вĕçетчĕ тусан...
Акă халь çĕрĕн сăнĕ йăлт урăх,
Катанпир сарнă евĕр шап-шур—
Пусăрнать нăтăр-нăтăр туса
Урасем айĕнче шурă юр.
Кĕç ак пуçлĕ урма çил-тăман,
Шăтăк-шатăк çуртсем шыраса.
Ачасем йĕлтĕрпе ярăнаççĕ,
Савăнаççĕ хĕлле пулнипе:
Икĕ касăллă плуг пек хăвараççĕ
Мăшăр йĕр, çиппеле çапнă пек,
Хĕлĕн шурă çиттийĕ çинче.
Çук, юлмасп эпĕ те вĕсенчен,
Ярăнап ту питне тĕрлесе.
Ярăнмассерен халĕ мана
Питсенчи йăрăм-ярăм йĕрсем
Сахалланнă пекех туйăнать.

1940.

* * *

Хура тинĕс пит хаяр,
Час-часах урса каять...
Тусене тӳнтерес пек,
Вăл перет хумĕсемпе.

Шура çĕлĕклĕ тусем
Тăчĕç нумайччен тӳссе,
Тытăнчĕç вара кайран
Хумсене çапса ватма,

Тинĕс те вăйне кура
Хăвăрт парăнасшăн мар,
Тапăнать çине-çине,
Вăл çĕнесшĕн тусене.

Пычĕ çапăçу вăрах,
Вăл пĕтмерĕ хăвăртах;
Ир енне кайсан кăна
Килчĕ лăпкă самана;

Чакрĕ тинĕс чашласа,
Шура кăпăк кăларса.

1940.

# ЮРАТУ

## ÇУРХИ САДРА

Пахча шур тутăрпа пĕркеннĕ, тейĕн,—
Улмуççисем лараççĕ çеçкене,
Сад-пахчи мар, этемлĕхĕн телейĕ
Çапла илемленсе чечекленет.

Кунта халь кам телей çуккишĕн йĕрĕ?
Çиçет-çке савнăç пирĕн питсенче!
Хĕрсем юрла-юрла тĕрлеççĕ тĕрĕ,
Хĕвел шевли вылять шур пир çинче.

Хĕрсен юррисенче—хаваслă çемĕ,
Кунçул кĕвви вĕсен юррисенче;
Халь çак телейлĕ пурнăçăн илемĕ
Эрешленет вĕсен тĕррисенче.

Эп те сăввăмсене паха тăвасшăн,
Çырасшăн чи хитре сăмахсемпе:
Сăввăмсенче хальхи çынсен хавасĕ
Вылятăр, теп, хĕвел шевлийĕ пек.

1939.

## ЮРАТУ

Хӑна эп пултӑм иртнӗ эрнере,
Юлташӑм чӗнчӗ ҫӗнӗ хваттере.
Калатӑп чӑннипе: пулман хальччен
Нихҫан та ӳсӗр ун чухнехи пек.
Эрехпе мар ӳсӗрӗлчӗ чӗрем,
Чӗрем ӳсӗрӗлчӗ урӑххипе
Хисеплӗ ҫыннӑн килӗнче.

Ун кӗҫӗн хӗрӗ илчӗ тыткӑна,
Вӑл тӗлӗнтерчӗ хитрипе мана.
Пит-куҫӗсем ытараймиччӗ ун,
Ӑна пӑхса йӑпанчӗ манӑн чун.
Сӑмах чӗнмесӗрех пӗрне пӗри
Ӑнлантӑмӑр. Пулать пушшех вӗри
Ун пек чухне яш-кӗрӗмсен чӗри.

Ҫӑлкуҫӗ пек тӑп-тӑрӑ куҫсенче
Эп куртӑм савнӑҫ сачӗ ӳснине.

Пулассӑм килчӗ шӑпчӑк ун чухне,
Юрлассӑм килчӗ ҫав сад-пахчинче,
Юрассӑм килчӗ унӑн хуҫине...
Ҫемҫетрӗ сӑвӑҫ чӗрине пике,
Ҫынна халран яран эрех пекех.

Вӑл эпӗ кайнӑ чух чӳречерен
Пӑхса юлайрӗ. Манӑн чӗререн
Ҫырассӑм килчӗ сӑвӑ ун ҫинчен.
Туссем, ун пек хӗре мӗнле манас?
Курас килет пӗрмай ман ҫав хӗре,
Тек шухӑшлап: хӑҫан вӗсем тепре
Хӑйсем патне чӗнеҫ-ши хӑнана?

1939.

## ИМЕННИ

Санпа чух ман чӗлхе ҫыхланать,
Калаҫма тупаймастӑп сӑмах.
Эс ҫапах ӑнлансамччӗ мана,
Эс туйсам ман юратӑвӑма,

Нихӑҫан та чунтан савакан
Каламасть: „юрататӑп“ тесе.
Унсӑрах ӑнланаҫҫӗ ялан
Пӗр-пӗрне савакан чӗресем.

1940.

# ӐКӖТЛЕНИ

Ман умра эс тăран чечек пек,
Йăпанап эп санри илемпе.

Çивĕтӳ ылттăн шыв таппи пек
Курăнать йăлтăркка кăтрипе.

Килĕшет сан куллу та мана,
Шăнкăрав сасси пек туйăнать.

Чĕререн юратап эп сана,
Çавăнпа ытарми ăмсанап.

Эс умра пулмасан, çутă кун
Кĕрхи тĕттĕм каç евĕр салху.

Çут хĕвел маншăн эс кăнтăрла,
Каçхине çутатан уйăхла.

Тусĕпе юратса пурнакан
Нихăçан та курмасть хурлăха;

Унăн кăмăлĕ çутă-уяр
Кунсене асилмешкĕн çеç мар,

Инçетри пурнăçа та курма,
Юратса пурăнсан, йывăр мар.

Çавăнпа эп каласшăн сана:
Иксĕмĕр пĕрлешсе пурăнар.

1940.

## ХӖР ТУНСӐХЛАНИ

Савнӑ тусӑм кайрӗ Хӗрлӗ ҫар ретне,
Вӑл хушса хӑварчӗ виҫӗ ҫул кӗтме.
Эп кӗтсе пурнатӑп, вӑрттӑн хуйхӑратӑп,
Хуйхӑна сирмешкӗн юрӑсем юрлатӑп.
Каҫхине тухатӑп йывӑҫ пахчине,
Итлесе ларатӑп шӑпчӑк юррине.
Ун юрри савниййӗн юрри пек халь маншӑн,
Уйӑх та пӑхать пек савнилле йӑвашшӑн,
Ҫил вӗрсен—туятӑп вӑл лӑпканине.
Вӑл килет пуль, тетӗп, ҫакӑ кӗркунне.
Кӗркунне пулайӗ маншӑн ҫуркунне,
Ҫавнине чуптӑвӑп хыттӑн ун чухне.
Ӗмӗрлӗх юлсассӑн Хӗрлӗ ҫар ретне,
Пурӑнма мана вӑл илӗ хӑй патне.

1940.

## ÇЫРУ

Эс çыратăн: „Тунсăхлатăп, сансăр
Хама хам телейсĕр пек туяп.
Пурăнап ниçта тухса курмасăр,
Тек кĕтетĕп хамăрăн туя.

Эсĕ: ик çултан килетĕп, терĕн.
Иртрĕ икĕ çул, шыв пек юхса.
Эс çапах та ман пата килмерĕн,
Е килме те шухăш çук-и сан?"

Халĕ те тен эсĕ хуйхăратăн,
Çăлтăрлă тӳпе çине пăхса...
Эп манман тăван Шупашкара та,
Эсĕ те пĕрмай килен аса.

Тек асилтерет мана çут уйăх
Сан сăнна, чăп-чăмăр питсене;
Çăлтăрсем вăйя тухсассăн шуйăн,
Асилетĕп сан куçусене.

Сансăр эпĕ те салхуланатăп,
Çавăн пек йăлийĕ савнисен;
Хатĕр тепĕр чух вĕçсе пыма та,
Санăн çырăвусене илсен.

1940.

* * *

Манӑн савни—капитан,
Ишсе уйрӑлчӗ манран.

Эп шухӑша путнӑ пек,
Путмӗ вӑл акӑшӗпе.

Килӗ, паттӑр пек, рейсран—
Ҫавӑнпа каймасть асран.

Эпӗ юрӑ юрласа
Асӑнатӑп халь туса.

1940.

## ШУРӐ ТУТӐР

Савнӑ тус пиллерӗ шурӑ тутӑр,
Шурӑ тутӑр—юрату парни.
Çулӑмланчӗ манӑн юрату та,
Ылттӑн евӗр туйӑнчӗ савни.

Сывлӑша гудок сассийӗ çурчӗ,
Вӑл вӑратрӗ лӑпкӑ таврана.—
Килсе ларчӗ Кама пӑрахучӗ,
Вӑхӑт халь ларса кайма мана.

Эп каларӑм: сывӑ пул-ха, терӗм,
Алӑ патӑм чунӑм савнине.
Савнӑ тусӑм темшӗн тӳсеймерӗ,
Шывлантарчӗ çӗмӗрт куçсене.

Эп ӑнлантӑм: ун чӗри хурланчӗ,
Вӑл пытарчӗ куллипе ӑна.
Темшӗн уйрӑлу кирек-хӑçан та
Хурлӑхпа ыраттарать чуна.

Эп ăна: ан макăр, тусăм, терĕм,
Куççульпе сÿнмест чĕре çунни.
Хам çинчен çыру çырса пĕлтерĕп,
Эсĕ те çыр ху çинчен, савни.

Вăл каларĕ: пул хăюллă паттăр,
Çĕршыва сыхла эс çирĕпрех.
Эп вара пушшех сана юратăп,
Сан тусу эп пулăп ĕмĕрех.

Тăшмансем çĕршыв çине килсессĕн,
Амантсан вĕсен пульли сана:
Суранна çак тутăрпа çых эсĕ,
Вăл часрах тÿрлетĕ суранна.

Савнă тус пиллерĕ шурă тутăр,
Шурă тутăр—юрату парни.
Çулăмланчĕ манăн юрату та,
Ылттăн евĕр туйăнчĕ савни.

1940.

## САВНИ КУҪЁСЕМ

Сӳнтерчӗ шуҫӑм тӳпери
Ҫӑлтӑрсене, ирпе анне
Ҫут лампӑна сӳнтернӗ пек;
Хӑварчӗ вӗсенчен юри
Ман чысшӑн ҫутӑлнисене.
Вӗсем—савнийӗн куҫӗсем,
Ҫиҫеҫҫӗ туслӑх хӗмӗпе.
Эп куртӑм халӗ вӗсене.

1940.

## САВНИСЕН ЮРРИ

Шăнкăр-шăнкăр шыв юхать
Аслă улăх варрипе.
Эпĕ тухрăм улăха
Çăвăнма çăл шывĕпе.

Пырса тухрĕ ăнсăртран
Манăн савни купăспа.
Килнĕ вăл ĕнер çартан
Уйăх çурлăх отпуска.

Çакнă кăкăрĕ çине
Вăл ик орден пĕр тăрук.
Пĕри—Ленин орденĕ,
Тепри—„Хĕрлĕ çăлтăр“ ун.

Çавăн пек хастар çынна
Мĕншĕн савас мар хĕрсем?
Тунсăхлаттăм яланах
Эп вăл килессе кĕтсе.

Халь тĕл пултăм та ăна,
Ларчĕ çыхланса чĕлхем...
Каччă чуптусан кăна,
Пултăм эпĕ пуплекен.

1940.

# ТУСЛĂХ

## РОМАНС

(А. Пушкинран)

Тытса телейсĕр юратуван
Чĕр çимĕçне аллисемпе,
Йĕпе кĕр кунĕнче, каç умĕн
Хĕр пынă пушă уй-хирпе.
Вăрман, уй-хир, сăртсем шăп пулнă,
Пурте сĕнк пулнă каçхине.
Йĕри-тавра пăхса хĕр утнă,
Вылятнă шиклĕн куçсене.

Салхуланса пăхма пуçланă
Вăл хăйĕн пĕчĕк ачине...
„Ачам, ман тертĕм, çыврăн эс,
Пĕлместĕн эп хурланнине.
Куçна ак уçăн та кичемлĕн
Эс шырăн кăкăра манне,
Анчах кураймăн эс, хĕрхенĕн,
Хăвна анну чуптунине.

Ăна эс шырăн та тупаймăн,
Хĕретĕ намăс ман săна!
Ĕмĕрлĕхех мана эс манăн,
Анчах манаймăп эп сана.

Урăххисем усравлăх илĕç.
Вĕсем кӳрентерсен сана,
Эс ыйтăн: эпĕ кам ачийĕ?
Анчах тупаймăн килйышна.

Телейсĕрскер! Салхуллăн çӳрĕн,
Кураймăн пурнăç савнăçне.
Çын амăшĕ çине эс тӳртĕн
Пăхса, юхтарăн куççульне.
Пĕччен çеç çӳрĕн пур çĕрте те,
Ылханăн хăвăн раскална.
Ылханнине те эсĕ илтĕн...
Каçар, каçар ун чух мана!

Çывратăн эс. Юлашки хут эп
Сана йăвашшăн тинкереп;
Çапла, хĕн-хурлă туса хучĕ
Суя, тискер закон пире.
Сан савнăçна çулсем хăвалĕç,
Пĕр шиксĕр савнăç пур чухне
Эс çывăр! Йывăр хурлăх халĕ
Тивмест сан çамрăк чĕрӳне...“

Кĕтмен çĕртен çутатнă уйăх
Хĕр умĕнчи пĕччен киле.
Хут пек шуралнă хĕр салхуллăн
Çывхарнă алăк патнелле,
Кăшт пĕшкĕнсе хурса хăварнă
Ют пӳрт умне вăл ачине,
Кайран часах унтан çухалнă.
Пытаннă каçăн сĕмлĕхне.

## АВГУСТА ПАТНЕ ЯНӐ СТАНССЕМ

(Байронран)

Тӑрса юлтӑм эп чапсӑр, телейсӗр,
Ҫӑлтӑрӑм тахҫанах аннӑ ман.
Эсӗ ҫеҫ шут тытмарӑн шеллевсӗр
Манӑн ҫамрӑк чуна ҫунтарма.
Эсӗ ҫеҫ чунупа чӳхенмерӗн,
Чӗрӳнте сан пиччу манӑҫман!
Хаклӑ юратӑва та халь чӗррӗн
Санра ҫеҫ тупма май килчӗ ман.

Илӗртӳллӗн кулса, ҫутҫанталӑк
Патӑрах хӑйӗн мулӗсене.
Паранайрӑм ӑна эп йӑлт халӗ,
Йӑмӑкӑн куллине асилсе.
Ҫил-тӑвӑл хумсемпе ҫамӑҫмашкӑн
Пӗлӗт урлӑ вӗҫсе кайтӑрах,
Пирӗн хушӑмӑрта халӗ аслӑ
Океан выртнӑшӑн хуйхӑрап.

Юлашки яккӑрӑм ӳкнӗ пултӑр,
Путнӑ пултӑр пӑтранчӑк шывра;—
Пур ҫӗрте те манран хурлӑх култӑр,
Хӑрамастӑп тискер кунҫулран!
Намӑссӑр ҫынсем тек элеклеҫҫӗ,

Пулăшаççĕ хаяр кунçула.
Пурпĕрех кăкăра çĕмреймеççĕ,
Сан çинчен шутласан эп ялан.

Çынсенчен эсĕ çеç пăрахмарăн,
Тусăм пултăн—хĕрарăмсенчен.
Пĕр-пĕччен элекрен хăрамарăн,
Эс манмарăн мана пĕр-пĕччен.
Эс çынсем суйнине ĕненмерĕн,
Сивĕнмерĕ манран чĕрӳ сан;
Савнăшăн ӳпкевпе тӳлемерĕн,
Ырлăхшăн эс тумарăн усал.

Ывăнтăм. Ылханмастăн эс уншăн,
Çынсене эп текех тăшман мар.
Хыпаланччăрах халь тарăхуллăн
Пĕчченçи çынпала çапăçма!
Ылханса вĕсене чарас çук эп,
Пĕрпек мар вăрçă кĕртрĕ тăна:
Кăмăллап вăрçăна, хăвнине те—
Вĕсем урлă эп куртăм сана.

Пушхирти çĕмрĕксен хушшинче эп
Шикленӳсĕр, хăюллăн тăрап.
Юлашки тивĕçе хăть илеймĕç,
Эп памастăп сан юратăва...
Курăнмасть пушă хир те кичеммĕн,
Çĕмрĕксем те мана пит паха.
Çĕмрĕксен айĕнче куртăм эпĕ
Вут çинче те пĕтмен ахаха.

## ГЕРОЙ ВИЛСЕН

(Байронран)

Герой, кунçул сан татăлчĕ!
Халь пуçланать чапу сан шавлăн.
Тăван çĕршыв юррисенче
Ятна усрать, усрать мухтавлăн.
Тата çĕршывшăн ыр ĕçў
Нихçан та манăç пулас çук.

Сан ирĕк илнĕ халăху
Ялан сана манмасăр тăрĕ.
Эс вилтĕн! Сан юхать юну
Халь пирĕн юн тымарĕ тăрăх.
Санри пур паттăрлăх пире
Кĕрешĕве çĕклентерет.

Çапăçура, сана аса илсен,
Пуçлать тăшманăн вăй чакмашкăн.
Герой чыспа вилни çинчен
Хĕрсем пуçлаççĕ юрламашкăн.
Анчах курайман йĕрнине,
Вăл чакарать герой чысне.

## СОНЕТ

(М. Рыльскийрен)

Ман шухăш майлă вĕçсĕр шыв юхать,
Кĕперĕсем—хавхалану пек лайăх.
Çӳлте вĕçсе çӳреççĕ тĕрлĕ кайăк,
Шывра мотор аслати пек шавлать.

Кунта кĕçеннĕ вăрçă учĕсем,
Вĕçтернĕ вăрçă сывлăшра вут-çулăм,
Аркатрĕ ун аллисене хăюллăн
Совет аллийĕ, çирĕп вăй илсе.

Тăшман айлатрĕ те час лăпсăртатрĕ,
Йӳтенĕ кашкăр евĕр, каялла.
Тĕрмесене мăлатуксем аркатрĕç.

Çав кĕллĕ вырăнта паян хула
Хальччен пулман керменсемпе йышланчĕ,
Вăл Днепр çийĕн çамрăккăн çуталчĕ.

## МАНĂН ÇУЛ

(Леся Украинкăран)

Çуркуннепе ирех çула эп тухрăм,
Хам утнă майăн юрă кĕвĕлетĕп.
Кам çул çинче манпа тĕлпулĕ, туххăм
Ун ячĕпе çапла юрлатăп эпĕ:

„Пĕччен кайсан—çухалăн эс çулран,
Пĕрле тӳр çул тупмашкăн çăмăлрах“.

Эп юрăпа тек малалла пыратăп.
Ман юрăра пророклăх çук, ан шырăр.
Ман сассăм уçă мар, çапах эп ырă—
Кам хурланса йĕрет, ăна калатăп:

„Хисеплĕ тусăм, макăрар пĕрле—
Эп юррăма çăвап куççульпеле“.

Çак пусмăрти çулсем тискер те тĕксĕм.
Эп çул çинче хаваслăн та хăюллăн
Телейлĕ ирĕк юррине илтсессĕн,

Ман чĕрере те пулĕ урăх юрă.
Пытарăп хамăн нишлĕ сассăма,
Ирĕк юрри пуçланĕ шăранма.
Эп тĕксĕм тӳпене пăхап пулсассăн,

Çĕн çăлтăрсем пĕрре те шырамастăп.
Кунçул тĕтрийĕ витĕр эп курасшăн:
Тăванлăх, танлăх, ирĕклĕ хаваслăх—
Тăван çĕршывăн виçĕ çăлтăрне,
Халь инçетрен çеç çиçекенсене.

Эп çул çинче хăть хурлăх çеç тупам,
Хăть çепĕç чечек çеç курнайтăр ăшшăн;
Хăть тивтĕр вăхăтсăр вилсе выртмашкăн—
Мĕнле пулсан та, пурнăçăн çулне
Çĕн юрă юрласа вĕçлесшĕн эп.

1913.

## ТРИПОЛЬЕ ПАТТĂРĔСЕНЕ

(Леонид Первомайскийрен)

Масар мар, куççуль мар, чечек мар,—
Юлчĕç чаплă ĕçсем асăнма.

Эсĕр вилетĕр-çке Днепр çинче,
Чап çӳрет халĕ сирĕн çинчен.

Сирĕн ӳтĕр пĕрлешнĕ çĕрпе,
Хурлăх ларчĕ ӳссе эрĕм пек.

Тупăпа сухаланнă хирсем,
Ӳсес çук халь унта эрĕмсем.

Питĕ шавлăн иртеççĕ çулсем,
Тĕнчене хыпарсем валеççе.

Пирĕншĕн кашни çул—çĕнтерӳ,
Кашни çул—çĕн хăват, çĕн хĕрӳ.

Ахаль мар, ахаль мар, ахаль мар,
Тухнӑ ирӗклӗхшӗн ҫапӑҫма.

Ахаль мар, паттӑрсем, пӗлнипе,
Кайнӑ ҫав кӗрешӳ ҫулӗпе.

Выртса юлтӑр вӑрҫӑ хирӗнче,
Юлчӗҫ паттӑрлӑхӑр пирӗнте.

Халь ӗнтӗ кив Триполье тек ҫук,
Ячӗ ун Комсомолье ку чух.

Халь унта урӑхла пурӑнӑҫ,
Ҫӗнӗ ял хула пек курӑнать.

Заверуха, Палей, Дымарец
Уй-хирпе утнине туйӑн эс.

Ав, вӗсем, паттӑрсем, малалла
Тек утаҫҫӗ колоннӑпала.

Комиссар та, Ратманский пӗрле,
Ӗҫлӗ кун Днепрострой пек кӗрлет.

Эй, кӗрле аслати сасси пек,
Ҫӗнтерӳ яланах пирӗнпе!

Ахаль мар, ахаль мар, ахаль мар,
Тухнӑ ирӗклӗхшӗн ҫапӑҫма.

Эпӗр пӗлнӗ вӑрҫма, ҫӗнтерме,
Тӑшмана ҫӗршывран хӳтерме.

Ылхану ҫӗршыв тӑрӑх ҫӳрет,
Тӑшмана вӑл хаяррӑн питлет.

Хӗрлӗ ҫӑлтӑр, ҫутат, ялтӑртат,
Малашне те пире ҫул кӑтарт.

# СТАЛИН

(Володимир Сосюраран)

Яту сан çывăх, юрă пек, пире:
Кирек-ăçта та пирĕнпе пĕрле эс.
Сана, ялан ялав пек вĕлкĕшме,
Миллион алсем тӳпе патнех çĕклерĕç.

Эс яланах пире пыран ертсе,
Санпа пĕрле эпир пит çирĕп халлă
Миллион чĕресене пĕрлештерсен—
Пулать вăл сан чĕрӳ, хисеплĕ Сталин.

Ялпа хула шавлаççĕ. Хăпарать
Кăвак инçелĕхрен телей хĕвелĕ.
Çĕршыв сана хĕрӳллĕн юратать,
Сан пехилпе анчах эпир телейлĕ.

Чечекленет çĕршыв хавас вăрманĕнче,
Çапăçура юрланă юрă евĕр.

Санран ку килчĕ, санăн партинчен,
Сире пула анчах çĕнтернĕ эпĕр.

Çук, çухалмарĕ юн тăкни ахаль,
Çухалчĕ выçлăх, иртсе карĕ хурлăх.
Заводсемпе хирсем хаваслă халь,
Шăрантараççĕ юрă хыççăн юрă.

Илсем телейлĕ халăх юррине,
Вăл сан çинчен юрлать янравлăн, уççăн.
Малашлăха ертсе пыратăн эс,
Ĕççыннисен мухтавĕ—эс, çулпуçĕ.

## ТУПМАЛЛИ


*Стр.*

Ҫăваш халăхĕ . . . . . . . . . . . . . . . . 3
Парашютист калавĕ . . . . . . . . . . . . . 5
Щорс . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 7
Хасан вăрҫи . . . . . . . . . . . . . . . . 12
Сывлăшри хăна . . . . . . . . . . . . . . . 14
Чикĕре . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 18
Эпĕ тĕкĕр ҫине юратмастăп пăхма . . . . . . 19
Пушкина вуланă чух ялан . . . . . . . . . . 20
Казахстан . . . . . . . . . . . . . . . . . 21
Колхозниксен юрри . . . . . . . . . . . . . 22


## ПЕЙЗАЖ


Тӳперен хĕвел хĕртет . . . . . . . . . . . . 25
Тырпул пиҫет . . . . . . . . . . . . . . . . 26
Вырмара . . . . . . . . . . . . . . . . . . 27
Кĕркунне . . . . . . . . . . . . . . . . . . 28
Килчĕ хурлăх евĕр шăвăнса кĕр каҫĕ . . . . . 29
Лĕпĕшсем вĕҫеҫҫĕ . . . . . . . . . . . . . . 30
Хĕллехи кăмăл . . . . . . . . . . . . . . . 31
Хура тинĕс пит хаяр . . . . . . . . . . . . 32

## ЮРАТУ

Çурхи садра . . . . . . . . . . . . . . . . . . 35
Юрату . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 36
Именни . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 38
Ӳкĕтлени . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 39
Хĕр тунсăхлани . . . . . . . . . . . . . . . . 40
Çыру . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 41
Манăн савни—капитан . . . . . . . . . . . . . . 42
Шурă тутăр . . . . . . . . . . . . . . . . . . 43
Савни куçĕсем . . . . . . . . . . . . . . . . . 45
Савнисен юрри . . . . . . . . . . . . . . . . . 46

## ТУСЛĂХ

Романс . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 49
Августа патне янă станссем . . . . . . . . . . . 51
Герой вилсен . . . . . . . . . . . . . . . . . . 53
Сонет . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 54
Манăн çул . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 55
Триполье паттăрĕсене . . . . . . . . . . . . . . 57
Сталин . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 60

Редактор Н. Т. ВАСЯНКА
Техредактор Ф. Я. ЯКОВЛЕВ
Корректор Г. И. ИВАНОВ
Обл. худ. Г. ХАРЛАМПЬЕВА

Сдано
в произв. 28|XI
1940 г. Подп. к печати
23/XII-1940 г. Печ. листов 2
Печ.знак. 41.280 в п. л. Тир. 2000 экз.
Формат бумаги 60×92[1]/32.
Заказ № 3450
НТ—3073

Типография № 2 Наркомместпрома
Чувашской АССР, г. Алатырь.

Цена 1 р. 90 коп.

ВАСИЛИЙ УСЛИ

# СТИХИ

На чувашском языке

Госиздат ЧАССР
1941